82.3(0)9
С42
К-82494

# СКАЗКИ тюркских народов
# Туссен ЮМАХЁСЕМ



# Виçӗ ăслă канаш.

*Казах халăх юмахӗ.*

Пӗр пуян казахăн пӗртен-пӗр ывăл пулнă. Вăл пӗрмаях лаша кӗтӗвне пăхнă. Пӗррехинче ун патне палламан çын пынă та:

— Ачам, эсӗ мана хăвăн лашусене пар-ха. Эпӗ сана順ншăн виçӗ ăслă канаш парăп, — тенӗ.

Каччă килӗшнӗ те лашисене тыттарса янă. Палламан çын çапла каланă:

— Ачам! Çăкăр-тăварпа хăналаканшăн нихăçан та тăшман ан пул. Ир хатӗрленӗ апата ан тирке. Сылтăм аллу çапăçма вăрçă пуçласан сулахаййин ăна чармалла.

Çак сăмахсене каланă хыççăн палламан çын лашасене çавăтнă та куçран çухалнă.

Киле таврăнсан ывăлӗ ашшӗне палламан çын пирки пӗтӗмпех каласа панă. Ашшӗ тарăхса кайнă, ывăлне вăрçса пӗтернӗ, унтан килӗнчен хăваласа кăларса янă.

Чылай вăхăт çапкаланса çӳренӗ каччă, çӳресен-çӳресен хулана çитнӗ те хан керменӗ патне пынă. Ăна кермен сыхлавçисем курнă.

— Эсӗ кунта мӗн туса çӳретӗн? — ыйтнă вӗсем. — Пӗр-пӗр ӗçе вырнаçас кăмăл çук-и санăн?

— Мӗншӗн вырнаçас мар? Эпӗ сывă çын вӗт. Ӗçӗ пулсан мӗншӗн ӗçлес мар? Кулачă çиес тесен кăмака çинче вырт-ма юрамасть.

Сыхлавçăсем хана вӗсен хулине палламан йӗкӗт килни пирки пӗлтернӗ. Вăл ăслă ача, ханшăн усăллă çын пу-ласшăн тенӗ вӗсем. Хан çав ăслă ачана хăй патне кӗртме каланă.